# Чуна парса ĕçлеме шантарчĕ

***Пурте палăртаççĕ: Чăваш Енре ку суйлавшăн чăннипех пысăк çĕнĕлĕхсем кăтартуллă пулчĕç. Вĕсене, сасăлав кăтартăвĕсене тишкерме хăтланса пăхар.***

Пĕрлехи информаци центрне йĕркеленине чи малтан, паллах, журналистсем пысăка хурса хакларĕç. Кандидатсене, экспертсене, интереслентерекен ытти çынна шыраса-чупса çÿремелле мар – вĕсем хăйсем кунта килеççĕ. Сасăлавпа çыхăннă пĕтĕм информаци çакăнта пухăнать – алă айĕнче, массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсен ăна вулакан-куракан-итлекен патне пĕр тăхтамасăр илсе çитермелли кăна юлать.

Вырсарникун, 20 сехет. Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Александр Цветков сăмах илме хатĕрленет. Тÿрĕ эфир вĕт – НацТВ чиперукĕсенчен пĕри именмесĕр ун патне пырать, айккинелле пăрăнса кайнă çÿç пайăркине майлаштарса хурать. Пĕрлехи информаци центрĕн ертÿçи, «Правда ПФО» интернет-хаçат редакторĕ Александр Белов, «президиумра» Цветковпа юнашарах вырнаçнăскер, çакна сăнанă май кÿреннĕн сăмах хушать: «Мана вара?» Журналистка шÿте ăнланса ун патне те пырать – çÿçĕнчен ачашлать... Çакă та – ПИЦра мĕнешкел атмосфера хуçаланнин курăмлă палли.

Александр Цветков суйлав участокĕсем хупăнни, бюллетеньсене тишкерме пуçлани çинчен пĕлтернĕ хыççăн журналистсен умне социологи тĕпчевĕсем ирттерекен «Социс-М» компани ертÿçи Дмитрий Борцов тухрĕ. Шăпах ăна кĕтеттĕмĕр – суйлавăн малтанхи кăтартăвĕсене, экзитпол пĕтĕмлетĕвĕсене, хальлĕхе вăл кăна пĕлет. Компани суйлав участокĕсенчен тухакан граждансен хушшинче ыйтăм ирттернĕ – вĕсем камшăн сасăланипе кăсăкланнă. Борцов пĕлтернĕ тăрăх, 100 участокра пулнă, пĕтĕмпе 45 пин çын сасăлавĕпе интересленнĕ. Вĕсен 82% Олег Николаевшăн сасăлани çинчен каланă иккен.

Темле кĕтменлĕх мар, çапах – чăннипех пысăк кăтарту. Борцов асăрхаттарчĕ: çак цифра улшăнма та пултарать. Мĕншĕн тесен ытларах хуласенчи, пысăк ялсенчи суйлавçăсенчен ыйтса пĕлнĕ, пĕчĕк ялсенче пурăнакансен позицийĕ вара тепĕр чух урăхларах. Тепĕр самант та пур: граждансенчен хăшĕ-пĕри экзитпол вăхăтĕнче чăннине каламасть. Влаçри кандидат майлă сасăланине пĕлтерет, чăннипе вара хăй урăххишĕн сасăланă. Психологин çак уйрăмлăхĕ оппозицири кандидатсен чăн кăтартăвĕсене ÿстерет, влаçри кандидатăнне чакарать. Çапах унчченхи суйлавсенчи экзитполсен тата сасăлавсен чăн кăтартăвĕсен хушшинче уйрăмлăх пысăк пулман – 1,5% иртмен. Ку хутĕнче, чăн та, экзитпол самай ытларах йăнăшрĕ, çапах вăл кам çĕнтернине тĕрĕс кăтартрĕ – Николаев кăтартăвĕ чăннипех пысăк.




Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

● *ЧР Пуçлăхĕн суйлавне хутшăннă кандидатсем. Суйлав ку хутĕнче нихçанхинчен конкурентлăрах пулчĕ.*

Политика наукисен кандидачĕ, «Либераллă мисси» фонд экспертчĕ Александр Кынев çак кăтартура тĕлĕнтермĕш курмарĕ. Ун шучĕпе, асăннă цифра хыçĕнче – тĕрлĕ позициллĕ йыш сасăлавĕ. Пĕр енчен – влаç кандидачĕ /кандидат кирек кам пултăр – хăш-пĕр çын яланах влаçшăн сасăлать/, тепĕр енчен – оппозици çынни, мĕншĕн тесен Олег Алексеевич хăй чылай çул республика влаçĕшĕн оппозицире пулнă. Урăхла каласан, кусем те, лешсем те хăйсен сассисене Николаева панă. Кынев иккĕленмест: çапла пысăк йыш сасăлани кандидатшăн пур енĕпе те лайăх теме те çук – пурин шанăçне те тÿрре кăларма тивет. Сасăсен пĕчĕкрех проценчĕсем пулнă чухне кандидатшăн должноçа килсен йышăнусем тăвасси ансатрах-мĕн.

Вырăнсенчи пухусен депутачĕсен суйлавĕ тĕлĕшпе вара Кынев хăй тĕлĕннине пытармарĕ. Вăл «Пĕрлĕхлĕ Раççей» кăтартăвĕсем пĕчĕкрех пуласса, пенси реформипе, çавнашкал ытти самантпа çыхăннă йышăнусем унăн рейтингне чакарасса кĕтнĕ-мĕн. Сасăлав çакна тÿрре кăлармарĕ. Ытти парти те пуç çĕклени куçкĕрет пулин те «Пĕрлĕхлĕ Раççей» вырăнсенчи суйлавсенче пурпĕр лидер позицийĕсене çухатмарĕ.

Суйлавăн тепĕр çĕнĕлĕхĕ – сăнавçăсен чăннипех пысăк йышне явăçтарни. Вĕсем кашни суйлав участокĕнчех пулнă. Тĕрлĕ вăя пĕтĕçтерсе Общество сăнав штабне йĕркеленĕ, унта кашни сигнала шута илсе тивĕçлĕ тĕрĕслев ирттернĕ. Чăн та, журналистсен енчен штаб ертÿçине Дмитрий Донскова ÿпкелеме пăхакансем те пулчĕç. Сăнав – анлă, анчах суйлав саккунĕсене пăснин пĕр тĕслĕхне те çирĕплетмен...

Донсков парăнмарĕ: йĕркене пăснă тĕслĕхсем çинчен пĕлтернисем чылай, анчах вĕсене официаллă майпа çирĕплетмен. Хăш-пĕр тĕслĕхпе тивĕçлĕ тытăмсене явăçтарса тĕрĕслев пуçарнă – кăтартăвне кĕтмелле. Сăмах йĕркене пăснă мĕнле тĕслĕхсем пирки-ха? Калăпăр, районсенчен пĕринче депутата суйланас кăмăллă пĕр кандидатшăн сасăлаттарассишĕн граждансене эрехпе сăйлани çинчен пĕлтернĕ-мĕн. Ку саккунлă-и? Йĕркене пăснине ĕнентерсе пама та йывăр: саккуна пăсатăр тесен ĕçекеннипе ĕçтерекенни «эпир – юлташсем, тĕл пулнă ятпа пĕр черкке ĕçме пултараймастпăр-им?» тейĕç.

ТСК председателĕ Александр Цветков та, авă, шÿтлесе калать: пĕри теприне эрех ярса панине саккунсăр теме çук, анчах çапла хăналанинче камшăн та пулин сасăлама хистекен услови пулмалла мар. Кирек мĕнле пулсан та, Донсков шучĕпе, сăнав институчĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл Эйнштейна та цитатăларĕ: сăнани хăех сăнакан япалана улăштарма пултарать.

21 сехет. Сасăлавăн тĕп пĕтĕмлетĕвĕ – ЧР Пуçлăхĕн суйлавĕнче кам çĕнтерни – паллă ĕнтĕ. Кандидатсем те РЛДП представителĕсĕр Константин Степановсăр пуçне пурте кунта. Пĕрлех – вĕсен командисем те. Олег Николаевăн ĕçтешĕсемпе юлташĕсем уйрăмах йышлă. Мăшăрĕ Наталья Алексеевна та кунтах. Экзитпол кăтартăвĕсене кура кандидатсем черетпе пĕрин хыççăн тепри журналистсен умне тухрĕç.

«Раççей патриочĕсен» представителĕ Сергей Матвеев суйлава кандидат пулса хутшăнни хăйĕншĕн пысăк опыт пулнине палăртрĕ. Ун шучĕпе, «суйлав лайăх, пĕр-пĕрне пылчăкпа вараламасăр» иртрĕ. Пенсионерсен партийĕнчен кĕрешÿе тухнă Николай Степановăн шухăшĕ те уçăмлă: ытти суйлавпа танлаштарсан, ку хутĕнче сасăлав тÿрĕ кăмăллă пулнипе паха. Çапах ÿпкев те пулчĕ – суйлава кайман çынсене сивлерĕ: кухньăра-мĕнре влаçа ятлатпăр, мĕн те пулин улăштарма вăхăт çитсен вара сасăлама каймастпăр... Вăл çĕнтерÿçе ырă сунчĕ: «Çынсене хăйсен суйлавĕ тĕрĕс пулнине ĕнентерсе памалла пултăр. Эпир вара ĕçре пулăшса пырăпăр». Александр Андреев коммунист та çак суйлав кампанийĕнче пухнă пысăк опыт хăйĕншĕн малашне питĕ усăллă пуласси пирки иккĕленмерĕ.

Олег Николаев хăйĕн сăмахне пурне те тав тунинчен пуçларĕ: суйлавçăсене, суйлав кампанийĕнче хăйне пулăшса пынă командăна, ытти кандидата. Ун шучĕпе, çак суйлав тĕрлĕ вăя пĕрлештерме пултарчĕ – вĕсем алла-аллăн ĕçлеме пултарни куçкĕрет. Суйлав – хăйне евĕр чикĕ кăна, умра вара – пысăк ĕç. Пĕрле ĕçлесен, иккĕленмест вăл, пысăк ыйтусене татса пама пулатех.

Паллах, журналистсем уйрăммăн та калаçрĕ. Умри ĕçсен шутĕнче чи малтанах республика аталанăвĕн пилĕк çуллăх программине пурнăçлассине асăнчĕ. Ăна тĕплĕ хатĕрленĕ – экспертсемпе тишкерсе, отрасльсен тата муниципалитетсен шайĕнчи ĕçсене палăртса. Хăй енчен вăл республика Пуçлăхĕн должноçĕнче «чуна парса ĕçлеме» шантарчĕ. Çакă Министрсен Кабинетне, вырăнсенчи администрацисен ертÿçисене те пырса тивĕ – вĕсене ĕçлемешкĕн хистесси пирки асăрхаттарчĕ.

Республика Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлаканăн статусĕнче ĕçленĕ тапхăрта тĕрлĕ вăя пĕтĕçтерес тĕлĕшпе пурнăçланă ĕçе пысăка хурса хакларĕ: «Çак тапхăр эпир пурте пĕрле ĕçлеме пултарнине ĕнентерчĕ». Çак йĕрке упранса юлĕ. Вăл суйлава хутшăннă ытти кандидата та хăйĕн командине йышăнма, вĕсен программисенчи тĕллевсене пурнăçламашкăн йышăнма пултарассине палăртрĕ: «Чи кирли – вĕсем хăйсем пĕрле ĕçлеме хатĕрри. Кăмăлĕ пур тăк – çакăнпа усă курмаллах, хирĕçлемелле мар».

...Тĕп суйлав комиссийĕн официаллă кăтартăвĕсене кăшт кĕтме тивĕ, анчах пĕтĕмпех уçăмлă ĕнтĕ – Олег Николаев суйлавра çĕнтернĕ ятпа саламсем йышăнать. Ăна чи малтан саламланисен йышĕнче – республикăн пĕрремĕш Президенчĕ, Федерации Канашĕн пĕрремĕш вице-спикерĕ Николай Федоров. Николай Васильевич республикăн çĕнĕ ертÿçине ырлăх-сывлăх суннă май вăл тăван Чăваш Ене парăнса ĕçлессе, унăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсене тухăçлă татса парасса шаннине палăртнă. Çак сăмахсене республикăра пурăнакан кашни çын калама пултарать-тĕр: пурте аталану кĕтетпĕр, çакă тÿрре тухасса шанатпăр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**